ЫРКĂМАЛЛĂХ

# «Кĕмĕл активистсем» – савăнăç парнелекенсем



Çынна савăнма нумай та кирлĕ мар, сумлă çула çитсен вара пушшех те. Çакна районти ЧР Ĕçлев тата социаллă хÿтлĕх министерствин «Вăрмарти халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен комплекслă центрĕ» ЧР бюджет учрежденийĕнче ĕçлекенсем лайăх ăнланаççĕ. «Кĕмĕл волонтерсем» юхăма хутшăнса «Кĕмĕл активистсем» йĕркелесе обществăлла усăллă ĕç пурнăçлаççĕ. Вĕсем ытларах сумлă çулхи çынсене çамрăксемпе пĕрле явăçтарса хăйсем вĕсене питех те кирлине туйса илме пулăшаççĕ. Çакă ватлăх кунра пурăнма хавхалантарнине пĕлсе тăраççĕ активистсем.

Акă, иртнĕ кунсенче вĕсем Тикаш ял тăрăхне кĕрекен Хĕрлĕ Çыр ялне çитсе культура çурчĕ умĕнче концерт кăтартрĕç. Римма Курбанова, Антонина Александрова, Мария Федорова, Галина Богданова хăйсен пултарулăхĕпе халăха чылайччен савăнтарчĕç. Кăмăла çĕклекен сăвă-юрăсене ватăсемпе пĕрле çамрăксем те курчĕç. Хавхаланулла та çĕкленÿллĕ кăмăлпа ăсатрĕç ыркăмăллăх, савăнăç парнелекенсене.